

# ШКУЛ САССИ

сайт: putpobedy.ru

Проект авторĕ – Светлана Чикмякова.



Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.

# Фронтпа тыл паттăрĕсене таймапуç!

**Кадет класĕнче вĕреннĕ май вăрçă тата çар темипе ӳкернĕ фильмсене пăхма юрататăп.**

Вăрçă. Тискер, ылханлă вăрçă миçе çын пурнăçне вăхăтсăр татнă! Вăрçа пула мĕн чухлĕ çыннăн ырă та çутă ĕмĕчĕ-тĕллевĕ пурнăçланайман. Мĕн тери йывăр пулнă çынсене. Çапăçу хирĕнчи паттăрсем тăшмана çĕнтерессине ĕненнĕ, пурнăçа шеллемесĕр кĕрешнĕ. Тылра юлнă хĕрарăмсемпе ватă-вĕтĕ пур вăйран фронта пулăшма, хуçалăха тытса тăма тăрăшнă.

Ахальтен мар Чăваш ен Пуçлăхĕн Указĕпе килĕшӳллĕн 2021 çула республикăра Сăр тата Хусан хӳтĕлев чиккисене тăвакансен ĕç паттăрлăхне халаллана çулталăк тесе пĕлтернĕ.

Манăн ват асаннен аппăшĕ, Кӳлхĕрри ялĕнче çуралса ӳснĕ Ольга Савельевна Кучерова, вăрçă вăхăтĕнче 18 çулти хĕр кăна пулнă. Вăл Çĕмĕрле хули тăрăхĕнчи шахтăсенче торф кăларнă çĕрте вăй хунă. Шартлама сивĕре ĕçленĕ вĕсем, урара пир тăлапа çăпата тата резина ата пулнă. Çĕрпӳртсенче пурăннă. Унта тимĕр кăмака ларнă. Çĕрулми пĕçерсе çинĕ, шăнса пăрланнă çăпатисемпе тăллисене типĕтнĕ. 40–42 градус сивĕре лумсемпе, кĕреçесемпе ĕçленĕ, йывăр тиенĕ тачкăсене тĕкнĕ. Талăкра 10 сехет, канмалли кунсемсĕр вăй хунă.



Л.Ермошкина.

Лайăх ĕçленĕшĕн Ольга мăнаккана кĕпелĕх ситсă та, çăкăр та панă. Хăй çисе ярайманнине ват мăнакка типĕтсе сухари тунă, тăванĕсене илсе килсе çитернĕ. Выçăпа вилессинчен çăлса хăварнă.

Ольга Савельевна Кучерована Çĕмĕрле тăрăхĕнче тӳрĕ кăмăлпа тăрăшнăшăн медальпе чысланă. Эпĕ хам та тытса куртăм çĕршыв парнине. Çакăн пек çырнă унта: «Наше дело правое. Мы победили. За доблестный труд в Великой Отечественной войне 1941–1945 г.г.» Медалĕ халĕ ун хĕрĕн, Аля аппан, арчинче упранать.

Манăн асанне те, Уравăш салинче çуралса ӳснĕ Юлия Михайловна Ермошкина, вăрçă нушине курнă. Акă мĕн çырать вăл хăйĕн асаилĕвĕнче:

«Вăрçă тăвата çула тăсăлчĕ, юлашки çулсенче калама çук нушаллă вăхăта чăтса иртерме тиврĕ. Çимелли те, тăхăнмалли те пулман.

Анне мана çуралсанах кăкăр сĕчĕпе ӳстернĕ-ха. Каярах пахчара симĕс курăк, ут кăшкарĕ, кушак кĕпçи татса çиеттĕмĕр. Симĕс курăк çисе выçă вилмерĕм. Çуркунне уй-хире улма пуссине крахмал пуçтарма кайнă. Урана çăпата сырнă. Ана çинче ура путса ларатчĕ. Туртсан çăпатипе кантри тăталатчĕ, нуски те пылчăках юлатчĕ. Киле çара уран макăрса çитеттĕм. Ун хыççăн чирлеттĕм.

Хырăмĕ вара ялан выçать, мĕн çиес? Анне хурăн кăчки пуçтаратчĕ, армана кайса авăртса çăнăх тăватчĕ. Икерчĕ, пашалу пĕçерсе çитеретчĕ. Çавăн пек выçă вилмерĕмĕр. Улма çеçкинчен яшка вĕретсе çиеттĕмĕр.

Хĕл ларчĕ. 40–42 градус сивĕ. Пӳртри шыв та, чӳречесем те шăнса лараççĕ, урамри çынна кураймастăн. Кăмака хутма вутă çук. Анне патшалăх вуттине ĕçлеме кайнă. 2–3 эрнесĕр те киле яман. Мунча кĕме кăна килнĕ. Пĕр лав туратпа тавраннă, анчах вăл нумайлăха çитмен. Икĕ аппа касçхине уя улăм йăтма каятчĕç. Кăмакара ăна çунтараттăмăр. Улăмне те питĕ нушаллă илсе килнĕ. Уйра кашкăрсем хăвалана. Аппа шăрпăк илсе каятчĕ. Улăм çунтарса кашкăрсене çутăпа хăратнă. Çапла ăшăнкаласа пурăнтăмăр. Шăнса вилмерĕмĕр.

Эпĕ шкул çулне çитрĕм. Шкула каймалла, урана тăхăнма ним те çук. Кукаçи çăпата туса пачĕ. Кайран вăл та ватăлчĕ, пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Çăпата тăвакан çук. Камран пулăшу ыйтмалла?

Атте вăрçăран сывă таврăннă пулсан эпĕ те урана çĕнĕ çăпата сыраттăмчĕ пулĕ. Çук, килеймерĕ, кĕтсе илеймерĕмĕр. Хыпарсăр çухалнă хут кăна çитрĕ. Атте çăпатине сырса кураймарăм.

Шкула тăхăнса кайма та ним те пулман. Пĕр хытса ларнă фуфайка çирен хываннан. Хĕлле те, çуркунне те, кĕркунне те çавăнпах çӳренĕ. Питĕ сивĕ пулнăран кăмака тăррине чĕтресе çĕр касна, фуфайкăна хывман. Пӳрт пĕренисем сивĕпе шартлатса ларатчĕç. Çын шакканă евĕр туйăнатчĕ. Эпĕ аннене: «Тухса пăх-ха, атте килчĕ пуль, шаккать», – теттĕм. «Çук, аçу мар, сивĕ шаккать», – хуравлатчĕ анне вăртăн куççульне шăлса.

Çуллахи вăхăтра та апат пĕçерсе çиме вут-шанкă пулман. Çывăхри вăрмана кайса çĕртре выртакан туратсене пуçтарса йăтса килеттĕмĕр. Лесник хыт сыхлатчĕ. Тытсан парса яман, туртсах илетчĕ çыхăсене. Анне карта хăми сӳтсе апат пĕçерсе çитеретчĕ. Ун чухне эпĕ 8–9 çулти ачаччĕ.

Колхозăн вăйлă лашисем патшалăх валли вутă хатĕрлеме вăрмана кайса пĕтнĕ. Ялта лашасем юлман, çавăнпа аппа вăкăр кӳлсе мăн вăрмана – Авруйне – мана турат пуçтарма илсе кайрĕ. Лавне тиесе каялла килнĕ чух вăкăрăн шыв ĕçес килнĕ, пĕвене туртса илсе кĕчĕ. Эпĕ лав тăррине шыва каятăр тесе макăрса ларатăп. Аппа чупса çитсе ăна пĕверен кăларчĕ. Çапла киле тулли лавпа çитрĕмĕр. Малалла нушаллă пурнăça çĕнтерсе пырса паянхи куна çитрĕм. 80 çултан иртрĕм»...

Чĕрене пырса тивекен сăмахсем. Асаннен дневникне вуланă май çурăм тăрăх сивĕ чупрĕ, ик куçăмран куççулĕ сăрханчĕ...

Хăрушă вăрçă вăхăтĕнче кăтартнă паттăрлăх яланах асра юлĕ. Пирĕн, хальхи çамрăксен, мирлĕ пурнăçшăн кĕрешсе пуç хунă салтаксене, тылра ĕçлесе çĕнтерĕве çывхартма пулăшнă хастарсене нихăçан та манмалла мар.

Хам ятран та çапла калас кăмăлăм пур. Чăваш халăхĕ – аптраман тавраш йăхĕнчен! Фронтра арăслан пек паттăр та маттур, ĕçре пăрчăкан пек çивĕч те правур пулнă! Тайма пуç фронтпа тыл паттăрĕсене! Ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

**Любовь ЕРМОШКИНА,**
**Санарпуç шкулĕнче 8-мĕш класра вĕренекен.**

# Кĕнеке – пирĕн çывăх тус



**Эпир, 2-мĕш класра вĕренекенсем, шкулти вулавăша çӳреме юрататпăр.**

Пысăк тăхтавра унта çĕнĕ кĕнекесемпе паллашатпăр. Уроксем хыççăн та пĕрле вулавăшра пухăнатпăр, тĕрлĕрен юмахсем çинчен калаçатпăр. Ун ертӳçи Татьяна Ильинична интереслĕ кĕнекесене киле парса ярать. Ытларах чăвашлисене вулама килĕштеретпĕр. Класс ертӳçи Альбина Валериановна Шишкова пире яланах тăрăшуллă пулма сĕнет.

– Пĕр кĕнеке пин çынна вĕрентет, – тет. Ун сăмахне яланах асра тытатпăр.

**Яна ЕГОРОВА,**
**Вăрман Кипекри шкулта 2-мĕш класра вĕренекен.**

# Мухтанатăп пиччепе

**Кашнин чи çывăх та юратнă çыннисем пур. Вĕсем – аттепе анне, пиччесемпе шăллăмсем, йăмăксем, аппасем.**

Манăн та юратнă пичче пур. Вăл – Мулакасси Мăрат ялĕнче çуралса ӳснĕ Никита Владимирович Александров, нимĕнле йывăрлăх умĕнче те пуçа усман каччă. Çав тери илемлĕ пит-куçлă та яштака пӳ-силлĕскер. Никита 20 çулта çеç. Çапах та тĕнче шайĕнчи чемпион ятне тивĕçме пултарнă.

Вăл пĕчĕк чух ытти ачаран нимĕнпе те уйрăлса тăман. Тантăшĕсемпе пĕрле йĕлтĕрпе, конькипе, çунашкапа ярăннă, хамăр умри пĕвере шыва кĕнĕ. Кашни кунах, нимĕнле çанталăка пăхмасăр, Кĕçĕн Кипекри вăтам шкула ăс пухма çӳренĕ. Çуллахи вăхăтра кĕтӳ пăхнă, утă-улăм пуçтарнă, атте-аннене пулăшнă. 4-мĕш класра вĕреннĕ чухне пичче Вăрнара спорт секцине çӳреме тытăннă, хул-çурăмне çирĕплетнĕ. Çавăнтан пуçласа унăн пурнăçĕ улшăнмаллипех улшăннă. Утăм хыççăн утăм, ăмăрту хыççăн ăмăрту, çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ.

Ăçта кăна çитсе курман пулĕ пичче. Хулисен ячĕсене каласа та пĕтерейĕмĕн: Пенза, Сочи, Мускав, Хусан, Ульяновск, Саратов тата ыттисем. Кашнинченех çĕнтерӳпе таврăнать. Вăл килнĕ çĕре анне яланах уяв сĕтелĕ хатĕрлет. Италирен вара Никита кикбоксинг енĕпе тĕнче чемпионĕ пулса таврăнчĕ. Ку унăн чи пысăк çитĕнĕвĕ. Вăл «спорт мастерĕ» ята тивĕçрĕ. Час-часах пиччен медалĕсене тыта-тыта пăхатăп. Çитмĕлтен те иртнĕ вĕсен шучĕ.



Н.Александров.

Халĕ Никита Шупашкарти аграри университетĕнче вĕренет. Çав вăхăтрах спорт ăмăртăвĕсене те хуса çӳрет.

Эпĕ хамăн пиччепе чăннипех мухтанатăп. Ăна курсах пулĕ, хам та спорт секцине çӳретĕп. Çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ тума ĕмĕтленетĕп.

**Карина АЛЕКСАНДРОВА,**
**Вăрнарти 2-мĕш шкулта 8-мĕш «г» класра вĕренекен.**

# Калининăсем – çĕнтерӳçĕсем

**Пирĕн шкулта спорта паталантарассине, ачасен ӳт-пĕвне писĕхтерессине пысăк вырăн уйăраççĕ. Вĕренекенсем çулсерен тĕрлĕ шайри ăмăртусенче палăраççĕ.**

Нумаях пулмасть, акă, районта шкул ачисен спартакиади йĕркипе футбол первенстви иртрĕ. Пирĕн шкулта вĕренекенсен командисем унта чаплă кăтартупа палăрчĕç. 2005 çулта çуралнисен тата кĕçĕнреххисен ушкăнĕнче хĕрачасем чемпионкăсем пулса тăчĕç!

Арçын ачасем те маттур вылярĕç. Тапса кĕртнĕ мечĕксен шучĕпе 2004 çулта çуралнисем тата кĕçĕнреххисем 2-мĕш, 2007–2008 çулсенче çуралнисем 3-мĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Футболла ачасене физкультура учителĕ Александр Федорович Михайлов туслаштарать.

**Даниил КОНДРАТЬЕВ,**
**Калининăри шкулта 11-мĕш класра вĕренекен.**

